26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943
ДЕКАБРЬ
25
ШАМАТКУН
254(6491) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ÇУМĔНЧИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, хăвăрттăн тапăнса пырса, паян, декабрĕн 24-мĕшĕнче ГОРОДОК хулипе пысăк чугунçул станцине — нимĕçсен Витебск енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне штурмласа тытса илнĕ.

ГОРОДОКА тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-лейтенантăн, МАЛЫШЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн ХЛЕБНИКОВАН тата артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН артиллерисчĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

СОЛДАТОВ генерал-майорăн 5-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, КОРЖЕНЕВСКИЙ генерал-майорăн 26-мĕш Гвардейски Восточно-Сибирски стрелковăй дивизийĕ, ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн 83-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, МАКСИМОВ генерал-майорăн 11-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, БУРЛЫГА полковникăн 10-мĕш Гвардейски танковăй бригади, СМИРНОВ подполковникăн 545-мĕш минометнăй полкĕ, ТОРОПОВ полковникăн 523-мĕш корпусной артиллери полкĕ, артиллери генерал-майорĕн АПРЕЛКИНАН 2-мĕш Гвардейски минометнăй дивизийĕ, НЕЛЕПА полковникăн 17-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, ШТУЛЬБЕРГ полковникăн 488-мĕш тупăллă артиллери полкĕ, КУРБАТОВ полковникăн 259-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ тата ЕВГРАФОВ майорăн 6-мĕш Гвардейски инженернăй батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас майпа ГОРОДОК хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçса чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «ГОРОДОКСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăçсене çапла чĕнмелле тăвас:

5-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Городокски стрелковăй дивизи,

26-мĕш Гвардейски Восточно-Сибирски Городокски стрелковăй дивизи,

83-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Городокски стрелковăй дивизи,

11-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Городокски стрелковăй дивизи,

10-мĕш Гвардейски Городокски танковăй бригада,

545-мĕш Городокски минометнăй полк,

523-мĕш Городокски корпусной артиллери полкĕ,

2-мĕш Гвардейски Городокски минометнăй дивизи,

17-мĕш Городокски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,

488-мĕш Городокски тупăллă артиллери полкĕ,

259-мĕш Городокски истребительнăй авиаци дивизийĕ,

6-мĕш Гвардейски Городокски инженернăй батальон.

Паян, декабрĕн 24-мĕшĕнче, 21 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ ГОРОДОК хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, çĕр çирĕм тăвата тупăпа вунпикĕ хут пĕр харăс, персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ГОРОДОК хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçакансене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1943 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ДЕКАБРĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 23-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен йышлă вăйĕсен атакисене сире-сире янă. тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

КОРОСТЕНЬ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 128 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр районра пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем юхан шыв урлă каçнă та, кĕтмен çĕртен пырса çапса, меллĕ позицисем тытса илнĕ. Сасартăк пырса çапнипе нимĕçсем васкасах каялла чакнă, хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕсене пăрахса хăварнă. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн подразделенисем гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçнă та темиçе ял тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче—нимĕç танкĕ, хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 2 артиллери батарейи, боеприпассем.

* * *

Жлобин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман атакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсем çапăçăва пехотăпа танксен йышлă вăйĕсене кĕртсе янă. Гитлеровецсем пирĕннинчен нумай йышлăрах пулнă пулин те, вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Хĕссе пыракан тăшмана каялла сирсе ярса, совет чаçĕсем ăна пысăк çухату тӳстернĕ. Артиллерипе бронебойщиксем нимĕçсен 47 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшманăн 9 танкĕ, пирĕн саперсем хунă минăсем çине пырса кĕрсе, сирпĕнсе кайнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Коростень хули районĕнче тăшман танкĕсемпе пехоти пирĕн пĕр соединенин позицийĕсене атакăланă. Совет артиллерисчĕсем нимĕçсене çывăхах янă та вĕсене вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсем пирĕн оборонăна татайман, вара васкасах каялла чакнă. Темиçе сехет иртсен, нимĕçсем хăйсен вăйĕсене урăхла майлаштарса тăратнă та пирĕн позицисене тепĕр енчен пыра-пыра атакăланă. Анчах çак хутĕнче те пирĕн çарсем нимĕçсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă. Кун каçиччен çав участокра нимĕçсен 27 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, гитлеровецсене пĕр батальонран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Невель хулинчен кăнтăртарахра нимĕçсен 87-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 187-мĕш артиллери полкĕн 5-мĕш батарейин командирĕ Эрих Виметаль капитан тыткăна лекнĕ. Вăл çапла каласа панă: «Вырăс çарĕсем пирĕн оборонăна татсан, мана çĕнĕ участока чакма приказ пачĕç. Унта эпĕ дивизион командирне Рост капитана куртăм. Вăл пире çавăрса илни çинчен каларĕ. Дивизи штабĕ ăçта тăнине вăл пĕлмен. Офицерсем çапла каларĕç: дивизи командирĕ пире пурне те пăрахса хăварса тарнă, терĕç. Ирхине пысăк колонна (обозсемпе пĕрле), вăрман çулĕсемпе пырса, çав ункăран тухса кайма хăтланчĕ. Анчах та эпир вăрманта тĕрлĕ полксен таракан салтакĕсене тĕл пултăмăр. Вĕсем пирĕн умри вырăна вырăссем йышăнни çинчен пĕлтерчĕç. Пурте калама çук хытă хăраса ӳкрĕç. Салтаксем ушкăнăн-ушкăнăн тата пĕччэншерĕн те ăçта килчĕ унта тарса саланчĕç. Кашни хăйĕн пурнăçне çăлассм çинчен кăна шухăшланă. Манпа пĕрле пулнă лейтенант Дитрих мана çапла каларĕ: «Эпĕ тăватă çул вăрçатăп ĕнтĕ, анчах та çакăн пек йĕркесĕрлĕхе, нимĕн тума аптранине курман», терĕ. Вăрманта аташса çӳренĕ хыççăн эпĕ вара çав лейтенантпа пĕрле тыткăна парăнтăм».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Запорожье облаçĕнчи Разумовка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç ирсĕрĕсем пирĕн яла йышăнсанах унта ылханлă «çĕнĕ йĕрке» тума тытăнчĕç. Нимĕçсем мирлĕ пурăнакан 200 çынна арестлерĕç те таçта илсе кайрĕç. Арестленисем çинчен халь нимĕнле хыпар та çук. Гитлер палачĕсем Кондрат Совăпа унăн 14 çулхи ачине тата Карл Коваля çакса вĕлерчĕç, Федот Коваля, Тимофей Ульянченкăна тата ялти ытти нумай çынсене персе вĕлерчĕç. Нимĕç вăрă-хурахĕсем халăха йăлтах çаратса тухрĕç. Каялла чакас умĕн гитлеровецсем больницăна тата ытти нумай çуртсене çунтарса ячĕç».

Акт çине Разумовка ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: Ефросинья Коваль, Николай Коваль, Мария Шевченко, Анна Костюченко.

## Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш Мускавран тухса кайни

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Чехословаки Республикин Президенчĕ доктор Эд. Бенеш Мускавран тухса кайнă. Унпа пĕрле Чехословаки Республикин ССР Союзĕнчи Посолĕ З. Фирлингер господин, Президент Кабинечĕн Начальникĕ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Информаци Службин Начальникĕ Я. Краус господин, Чехословакин Государство Совечĕн Членĕ Б. Брбенский господин, çавăн пекех Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Е. Корнейчук юлташ, НКИД-н Протокол Отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса пыракан Е. И. Фомин юлташ кайнă.

Вокзалта Эд. Бенеш господина тата унпа пĕрле каякан çынсене çак юлташсем ăсатса янă: СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ Н. Я. Наталевич юлташ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, Мускав хули Совечĕн Председатель Заместителĕ М. А. Яснов юлташ, Мускав хули Коменданчĕ генерал-майор К. Р. Синилов, СССР Совнаркомĕн Чехословаки çарĕсене тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Уполномоченнăйĕ Г. С. Жуков юлташ, НКИД-н Пичет Отделĕн Заведующийĕ Н. Г. Пальгунов юлташ, НКИД-н Европа ĕçĕсен 4-мĕш Отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин юлташ, НКО-н Тулашри çыхăнусен Отделĕн Начальникĕ генерал-майор В. Н. Евстигнеев, Совет Союзĕн Геройĕ пĕрремĕш рангри капитан Н. П. Египко, Мĕнпур славянсен Комитечĕн Председателĕ генерал-лейтенант А. С. Гундоров, Мĕнпур славянсен Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ профессор З. Неедлы, Мĕнпур славянсен Комитечĕн Ответлă Секретарĕ В. С. Осьминин юлташ.

Вокзалра ăсатса янă чухне çаксем пулнă: Иран Посолĕ М. Ахи господин, Норвеги Посолĕ Р. Андворд господин, Китай Посолĕ Фу Бинчан господин, Греци Посолĕ А. Политис господин т. ыт. те пулнă.

## Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ М. М. Романова юлташ уçрĕ.

Президиума ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе хула комитет бюровĕн членĕсене тата уйрăмăн ЦК ВКП(б) Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Серов юлташа, Бенскипе Канатов юлташсене суйларĕç.

Кун йĕркинче пĕр ыйту — Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă май Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ тунă хăйĕн историллĕ доклачĕпе приказĕнчи кăтартусене ВКП(б) Шупашкар хула организацийĕ мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен пулчĕ. Актив çак ыйтупа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕн И. М. Чарыков юлташăн докладне итлерĕ.

Совет халăхĕ çак иртнĕ çулта фронтпа тылра тунă çитĕнӳсем çинче чарăнса тăрса, Чарыков юлташ 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ тунă докладри сăмахсене аса илтерет:

«Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре иртнĕ çулталăк хушшинче пысăк çитĕнӳсем турĕç. Эпир вăрçă ĕçĕсене тĕпренех хамăр çĕршыв майлă улăштартăмăр, вăрçă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патне пырать. Анчах совет çыннисем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармa, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанма вĕренмен. Лăпланса лармa тытăнсан, çĕнтерĕве аларан вĕçертме пулать. Çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ. Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ».

— Пирĕн задача — Хĕрлĕ Çарăн çапăçури вăй-хăватне малалла ӳстерсе пырасси,—тет Чарыков юлташ,—çакă вăл, чи малтан, йăваш чунланса ларнине хирĕç, тимсĕрлĕхе хирĕç, каппайса ларнине хирĕç кĕрешесси, эпир пĕрмаях малалла кайса пырасси, ĕç майĕсене татах та пысăк çитĕнӳсем тума мобилизацилесси пулать.

Сталин юлташăн сăмахĕ — вăл тăван çĕршывăн приказĕ, вăл совет çыннисемшĕн пуриншĕн те ĕç программи пулса тăрать,—тет Чарыков юлташ.—Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине Чăваш республикинчи ĕççыннисем çĕнĕрен татах та ытларах вăй хурса ĕçленипе ответлеççĕ. Вунă кун хушшинче пирĕн республикăри колхозсемпе ĕçхресченĕсем государствăна 2 миллион та 500 пин пăт ытла тырă сутрĕç. Çакăн чухлĕ тырра 22 кун хушшинче государствăн элеваторĕсене турттарса пачĕç. Кăçал пирĕн колхозсем государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана срокчен ăнăçлăн пурнăçларĕç. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли 1944 çулхи обязательствăсем шучĕпе 105 пин пăт тырă аванспа парса хучĕç. Государствăна аш-какай октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парса татрĕç, кăçал государствăна иртнĕ çулхинчен 212 пин пăт ытларах аш-какай пачĕç.

1943 çулăн 11 уйăхĕ хушшинчи плана Шупашкар хула промышленноçĕ 107,1 процент пурнăçларĕ. Кăçал, малтанхи çур çул хушшинче, иртнĕ 1942 çулхи малтанхи çур çул хушшинчипе танлаштарсан, хула промышленноçĕ 39 процент нумайрах продукци туса кăларнă. Çакă вăл, Шупашкар хулинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен тӳрĕ кăмăлпа, вăя шеллемесĕр ĕçленин результачĕ. Хулари заводсенчен пĕри продукци туса кăлармалли çулталăкри плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 108 процент пурнăçларĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне планпа пăхнинчен нумай йӳнетнĕ. Завод коллективĕ фронт умĕнчи хăйĕн задачине уйăхран уйăхах чыслăн пурнăçласа пырать, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти ретре тăрать, 7-мĕш уйăх ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Сталин юлташăн Октябрь уявĕн кунĕсенчи историллĕ сăмахĕсемпе хавхаланса, заводри рабочисем çĕнĕрен пысăк обязательствăсем илчĕç. Стахановецсен ретне çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç, двухсотниксен хисепĕ 295 çынна çитрĕ. Заводăн чи лайăх ĕçлекен стахановецĕ Н. Офицеров юлташ вунă уйăх хушшинче кăçал 4 çулхи программăна тултарчĕ. Токарь Юрьев, фрезеровщик Михайлова, слесарьсем Морозовăпа Табакова тата ытти нумай юлташсем ĕç нормине кулленех 200 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Хулан ытти завочĕсенче те ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать. Анчах та çакăнпа эпир пĕр минутăлăха та лăпланса тăма пултараймастпăр.

Шупашкар хулинчи промышленноçăн ĕçĕнче ситменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем те нумай. Хула парторганизацийĕн пĕтĕм тимлĕхне çав ситменлĕхсене пĕтересси çине, пур предприятисемпе артельсем енĕпе те производствăн çулталăкри планне пурнăçласси çине хывмалла.

Чарыков юлташ çителĕксĕр ĕçлекен предприятисемпе артельсене ятсе кăтартать, вĕсен кая юлнин сăлтавĕсене уçса парать. Пирĕн—тет докладчик,—хулари кашни предприятирех çулталăкри плана ăнăçлăн пурнăçлама майсем пур. Хăшпĕр предприятисен руководителĕсем лăпланса ларнине тĕпренех пĕтермелле, хĕллехи вăхăтри йывăрлăхсене большевикла çĕнтерсе пымалла, продукци кăларас плана тултармалла.

Чарыков юлташ хула промышленноçĕн уйрăм отраçлĕсен ĕçĕ çинче чарăнса тăчĕ. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсемпе артелĕсем начар ĕçленине палăртрĕ. Вырăнти промышленность ноябрь уйăхĕнче продукци кăларас плана пурнăçламан, çавăн пекех хулари промартельсем те начар ĕçлеççĕ. Иртнĕ уйăхсенчи пекех Водосвет япăх ĕçлет. Хула промышленноçĕ валли вăл халĕ те кирлĕ чухлĕ энерги параймасть. Водосвет директорĕ Варфоломеев юлташ электростанцин вăйне ӳстерес тĕлĕшпе пур майсемпе те кирлĕ пек усă курмасть-ха, уйрăмах çĕнĕ машинăсене ĕçе ярасси вăраха юлса пырать, станцире большевикла йĕркелĕх туман, ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта мар. Хулана, вăл шутра, чи малтан, промышленноçа, электричество çителĕклĕ таран парас ыйтăва актив умне лартса, Чарыков юлташ çак тĕлĕшпе пурнăçлама кирлĕ татăклă задачăсем кăтартса парать.

Çакăнпа пĕрлех Чарыков юлташ электроэнергие типтерлĕ тыткалама кирли çинчен асăрхаттарать. Уйрăм учрежденисенче электричествăна мĕнле расходланипе пачах интересленменнине, çакăнпа вара партин пуçламĕш организацийĕсем те кулĕшсе ларнине паллă тăвать.

Вырăнти промышленность ноябрь уйăхĕнче çителĕксĕр ĕçлени курăнать. Партин хула комитечĕ тата унăн промышленность енĕпе ĕçлекен отделĕ вырăнти промышленноçăн ĕçĕпе кирлĕ пек интересленмест, хăшпĕр артельсем производство планне тултарманнипе килĕшсе лараты.

Шупашкар чугун çул станцийĕ çуллахи вăхăтра тавар куçарас тата турттарас плана ăнăçлăн пурнăçласа пычĕ пулсан, халĕ пачах çителĕксĕр ĕçлет. Хулари хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем тимсĕр ĕçленине пула станцире вагонсем ахаль ларасси ӳссе пырать. Çавна хирĕç станци коллективĕ тивĕçлипе кĕрешмест-ха.

Хулари ĕççыннисем хула валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе нумай вăй хурса ĕçлерĕç. Вутă касса хатĕрлемелли плана Шупашкар хули 107,8 процент пурнăçларĕ. Анчах та предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, çавăн пекех хула совечĕн исполкомĕпе леспромхоз та каснă вутта хулана турттарас тĕлĕшпе тума пултарнине пурне те тумарĕç. Çавăнпа та халĕ хулан çăкăр завочĕ тата пĕр завод пысăк йывăрлăх тӳсеççĕ. Çавăн пекех шкулсемпе ачасен ытти учрежденийĕсем тата халăх пурăнакан пысăк çуртсем валли вутă çителĕклĕ мар.

Чарыков юлташ хулана вутă парас ĕçре çакăн пек ситменлĕхсене урăх тӳсе тăма çукки çинчен каларĕ, çак ситменлĕхе халех пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ. Предприятисемпе учреждени руководителĕсен вутă турттарас ĕçе хăйсен пĕтĕм туртăм вăйне мобилизацилемелле, колхозсенчен панă лашасемпе туллин усă курмалла, вутă турттарма килнĕ колхозниксене хулара ĕçлеме лайăх майсем туса памалла.

Чарыков юлташ кадрсене суйласа илесси, вĕсене ĕçре вĕрентсе ӳстерсе пырасси çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Предприятисемпе учрежденисенчи тата хула хуçалăхĕнчи нумай тĕрлĕ ĕçсене ертсе пыма кадрсем кирлĕ. Партин вырăнти пуçламĕш организацийĕсен, çавăн пекех совет па хуçалăх организацийĕсен тĕп задачи—кадрсене куллен тимлĕн вĕрентсе ӳстерсе пырасси пулса тăрать. Пултарулла ĕçлекен, тӳрĕ кăмăлла çынсене ответлă ĕçсене куçарса лартмалла, вĕсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пырса çирĕплетмелле. Çамрăк рабочисем çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхни кирлĕ, мастерсем, технологсем, конструкторсем хатĕрлекен курссен ĕçне лайăхлатас пулать.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ĕççыннисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçленĕ вăхăтра хула парторганизацийĕ тавра партире тăман актив татах та ытларах ӳсрĕ. Çакă вăл партин пуçламĕш организацийĕсем хăйсен партиллĕ-организацилĕ ĕçне лайăхлатнин, предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем хушшинчи агитациллĕ ăнлантарулла ĕçе вăйлатнин результачĕ пулчĕ. Анчах тунă ĕçсемпе лăпланса лармалла мар. Сталин юлташăн çĕнтерӳ тума хавхалантаракан историллĕ доклачĕпе приказне масса хушшине малалла та анлăн сарса пымалла, коммунистсемпе комсомолецсем хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне кулленех ӳстерсе пыма тивĕçлĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе производствăри кулленхи ĕçпе çыхăнтарса пырас пулать, комсомол организацийĕсен ĕçне, физкультурăпа спорт, осоавиахим ĕçĕсене вăйлатмалла, комсомолецсемпе çамрăксене ĕçрен пушанна вăхăта культураллă ирттермелли майсем туса парассишĕн тăрăшмалла.

Чарыков юлташ доклачĕ тăрăх активлă прени пуçланчĕ. Пренире Ардаматский (пĕр заводри партбюро секретарĕн заместителĕ), Сергеев, Канатов, Трусова (ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ), Аникин (хула совет исполкомĕн председателĕ), Бенский, Енчиков (ВКП(б) хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ), Наумова (пиравăр фабрикин директорĕ) тата Сурсов юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсенче Сталин юлташ чĕнсе каланисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем çинчен каларĕç, ситменлĕхсене палăртрĕç, сӳрĕк ĕçлекенсене критикăларĕç.

Пĕр кăмăлпа йышăннă резолюцире актив пухăвĕ çакна палăртрĕ: Сталин юлташ тăван çĕршыв умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртесси—Шупашкар хулинчи большевиксен малашнехи тĕп ĕçĕ пулса тăрать.

Шупашкар хулинчи парторганизацисен тĕп задачисенчен пĕри вăл— çулталăкри плана кашни промышленность предприятийĕ енĕпе пурнăçа кĕртмелле тăвасси тата 1944-мĕш çулхи 1-мĕш кварталта ĕçлеме хула промышленноçне вăхăтра хатĕрлесе çитересси пулать. Актив пухăвĕ çакăн çинчен астутарса, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсемпе парторганизацисен секретарĕсене питех те тимлĕн тăрăшса ĕçлеме хушрĕ. Çак ĕçе производствăна лайăх организацилемесĕр, поточнăй метода хăнăхмасăр, кашни рабочипе работница кулленхи нормăна ăнăçлăн тултарса пымасăр е ирттерсе пурнăçламасăр пурнăçа кĕртме çук. Çавăн пекех ĕç дисциплинине те куллен çирĕплетсе пымалла.

Резолюцире промышленноçăн кашни уйрăм отраçлĕ, транспорт, хула транспорчĕ, çуртйĕр хуçалăхĕ, апат-çимĕç предприятийĕсемпе сутуилӳ организацийĕсем енĕпе практикăллă мероприятисем палăртнă.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладра лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртмешкĕн,—тесе çырнă резолюцире,— парти организацийĕсен партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене малашне татах та ытларах вăйлатса пымалла.

Парти активĕн пухăвĕ партипе хуçалăх тата совет организацийĕсене пурне те лăпланса ларассине, йăваш чунлă пулассине хирĕç большевикла кĕрешме, политикăллă сыхăлăха ытларах ӳстерме хушрĕ. Çавăнпа пĕрлех резолюцире çакна çирĕппĕн шантарса каланă: Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, парторганизацисем ертсе пынипе, малашне татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕç, тăшмана хăвăртрах çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшĕç.

*Çуракине большевикла хатӗрленер*

## ХИРЕ ТИСЛӖК КӐЛАРАÇÇӖ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Тихонов юлташ ертсе пыракан «Заря» колхоз членӗсем çитес çулхи çуракине тимлӗн хатӗрленме тытӑнчӗç. Паянхи куна хире 1.200 лав тислӗк кӑларнӑ. Кунта колхозниксем харпӑр-хӑй килӗнчен 3-шер тонна тислӗк кӑларма хатӗрлеççӗ. Ялхуçалӑх ӗçӗн ӑсти, П. Васильев колхозник хӑйӗн килӗнчен 5 тонна тислӗк кӑларма шутлать.

Çавӑн пекех вӑрлӑхсем хатӗрлес тӗлӗшпе те колхозра ӗç хӗрӳллӗн пырать. Ку тӗлӗшпе ятарласа тунӑ бригада ӗçлет. Бригада членӗсем Александров, Харитонова, Степанова юлташсем кулленхи нормӑна 250—300-шер процент тултарса ӗçлеççӗ. Кунсӑр пуçне, вӗсем 12 гектар çине акмалӑх пӑрçа вӑрлӑхне алӑпа суйланӑ. Çавӑнпа пӗрлех колхозниксем хирте юр тытма çапӑсем чылай касса хатӗрленӗ.

**С. АЙДАР.**

## Агротехника кружокӗнче

СЕНТӖР. (**Хамӑр корр.**). Кашмашри «Свобода» колхоз çумӗнче агротехникӑна вӗренмелли кружок организациленӗ. Ана опытлӑ агроном Е. Панфилов юлташ ертсе пырать. Паянхи кунччен 2 заняти ирттернӗ. 1-мӗшӗнче—тырпул туса илесси çутçанталӑк условийӗсенчен килни, 2-мӗш занятире тӑпрасем тата вӗсене çемçетесси çинчен вӗреннӗ. Занятие 30 çын çӳрет. Вӗсем тухса калаçаççӗ, пӗр-пӗрин опычӗсемпе паллашаççӗ.

**Т. ИВАНОВ.**

**Республикӑри колхозсем декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне çуракине мӗнле хатӗрленнине кӑтартакан**

**СВОДКА**

| Районсем | [illegible] | [illegible] | Тислӗк кӑларнӑ (процентпа) |
|---|---|---|---|
| Улатӑр | 75,6 | 27,0 | 15,6 |
| Элӗк | 75,3 | 40,7 | 22,7 |
| Вӑрнар | 90,6 | 123,0 | 55,6 |
| Йӗпреç | 81,7 | 23,5 | 22,7 |
| Ишлей | 79,5 | 43,7 | 19,9 |
| Калинино | 67,0 | 61,5 | 28,4 |
| Канаш | 69,6 | — | 6,1 |
| Куславкка | 71,7 | 58,9 | 15,2 |
| Комсомольски | 64,9 | 32,2 | 2,5 |
| Красноармейски | 68,5 | 41,1 | 20,7 |
| Хӗрлӗ Чутай | 66,5 | 9,5 | 4,3 |
| Кувакино | 68,8 | 36,3 | 12,5 |
| Сӗнтӗрвӑрри | 99,1 | 50,2 | 18,7 |
| Октябрьски | 75,1 | 29,3 | 12,0 |
| Первомайски | 77,6 | 60,4 | 12,5 |
| Пӑрачкав | 60,1 | 41,6 | 5,1 |
| Советски | 86,9 | 9,6 | 12,2 |
| Сӗнтӗр | 102,4 | 26,1 | 20,4 |
| Вӑрмар | 71,7 | 42,5 | 6,1 |
| Çӗрпӳ | 96,5 | 21,8 | 2,7 |
| Шупашкар | 79,4 | 6,9 | 2,2 |
| Чкаловски | 60,7 | 55,0 | 31,7 |
| Шӑмӑршӑ | 45,7 | 20,2 | 9,1 |
| Шӑхасан | 78,2 | 60,8 | 10,2 |
| Çӗмӗрле | 59,7 | 66,2 | 2,9 |
| Етӗрне | 87,3 | 12,5 | 8,4 |
| Елчӗк | 84,9 | 51,4 | 25,2 |
| Тӑвай | 88,1 | 11,9 | 5,2 |
| Шупашкар хули | 116,2 | — | 18,6 |

## Çамрӑксем çуракине хатӗрленессӗ

КУСЛАВККА, декабрӗн 24-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Комсомолӑн «Правда» колхозри пуçламӗш организацийӗ, Вӑрнар районӗнчи çамрӑк колхозниксем ноябрь уйӑхӗнче чӗнсе каланине сӳтсе-явса, çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе татӑклӑ обязательствӑсем илчӗ. Комсомолецсемпе çамрӑксем çак хӗлре кӗл пӗр тонна, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ 300 центнер пухма пулчӗç. Уйхирте юр тытса хӑварас ӗçе пионер отрячӗсене те активлӑн явӑçтарма палӑртрӗç. Вӑрлӑхсене сортласа хурас тӗлӗшпе халӗ колхозра çамрӑксен бригади ӗçлет.

**Г. КИРИЛЛОВА.**

## 1080 пӑт çӗрулми леçрӗç

КАНАШ, декабрӗн 18-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Асхвари «Красное пламя» колхоз (председателӗ Васильев юлташ) государство умӗнчи обязательствӑсене районра чи малтан пурнӑçларӗ. Пӗтӗмпе 9.880 пӑт тырӑ сутса, ӑна çийӗнчех хатӗрлев пунктне леçсе пачӗ. Çавӑнпа пӗрлех колхозниксем государствӑна 1 080 пӑт çӗрулми сутса, склада леçсе пачӗç

*Промышленность предприятийӗсем çӗнӗ çул умӗн*

## Производствӑри парнесем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри пур цехсенчи рабочисемпе работницӑсем те декабрь уйӑхӗн пуçламӑшӗнче фронтпа çӗршыва планран ирттерсе продукци пама обязательство илнӗччӗ. Халӗ вӗсем çав обязательствӑна чыслӑн пурнӑçласа пыраççӗ.

Механически цехри долбежник Н. Калашов ӗç нормине кашни кунах 250—300 процент тултарать. Юлашки кунсенче вӑл васкавлӑ заказсем пурнӑçларӗ. Ку ӗçре те паха тӗслӗхсем кӑтартрӗ. Çамрӑк токарь Н. Юраков задание 450 процента çити пурнӑçлать.

— Эпӗ хамӑн мӗнпур вӑя çӗнтерӳ тума паратӑп. Çак аслӑ вӑрçӑн юлашки тапхӑрӗнче эпӗ кашни кун задание виçӗ хут ытларах тултарса пырӑп,—тет вӑл.

Çавӑн пекех М. Дмитриев юлташ начальник пулса ӗçлекен цехри рабочисемпе работницӑсем те декабрь уйӑхӗнче ӗç тухӑçлӑхне ӳстерчӗç. Лиховид, Собченко, Зимин, Горшенина, Петров стахановецсем ӗç нормине тӑтӑшах 250—300 процент тултараççӗ.

**И. ЕГОРУШКИН.**

## Çулталӑк планне 11 уйӑхра тултарчӗ

Шупашкарти лесхимартель коллективӗ çулталӑкри производство программине декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑçларӗ. Паянхи куна вӑл планран ирттерсе 50 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларчӗ. Артельри стахановецсем Петуховпа Железов юлташсем кашни кунах ӗç нормине икӗ-виçӗ хут ирттерсе тултараççӗ. Кунта задание тултараймасӑр ӗçлекен рабочисем пачах та çук.

**А. АНДРЕЕВ.**

## Рационализациллӗ сӗнӳсене пурнӑçлаççӗ

ÇӖМӖРЛЕ, декабрӗн 21-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Верховный главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ кӑçалхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ докладра: «Çӗнтерӳ çывӑх ӗнтӗ, анчах та ӑна алла çавӑрса илес тесен, çӗнӗрен ытларах вӑй хуни, пӗтӗм тыл хӑйне хӑй шеллемесӗр ӗçлени кирлӗ», — терӗ. «Большевик» завод коллективӗ аслӑ çулпуçӑн чӗнӗвне ырласа, тӑван çӗршывпа фронт валли продукци ытлӑн-çитлӗн парса тӑма пулчӗ. Заводри паллӑ стахановецсем Никифоров, Денисов юлташсем, мастер Тӑраканов, слесарь Гогин, кочегар Романов юлташсем декабрь уйӑхӗнче тӑтӑшах икшер норма тултарса пыраççӗ.

Кӑçал заводра ӗçлекенсем ӗç тухӑçлӑхне хӑпартма рационализациллӗ 62 сӗнӳ панӑ. Вӗсенчен 22-шӗ пурнӑçа кӗнӗ те ӗнтӗ. Слесарь Моторин, Корниенко юлташсен паха сӗнӗвӗсем ӗç тухӑçлӑхне хӑпартма нумай пулӑшрӗç.

Халӗ завод коллективӗ çӗнӗ çулччен фронтпа çӗршыва планран ирттерсе продукци парассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пырать.

**И. ВАНИН,**
**Заводри главнӑй инженер.**

# Кӑçал Кӑпассем—районра малтисем

### 1. ÇӖНӖ ПРЕДСЕДАТЕЛЬ

«Ой, Кӑпас, Кӑпас, мӗнле санран хӑпас», — тенӗ пӗлтӗр Сӗнтӗртен пынӑ уполномоченнӑйсем Кӑпас пирки. Вӗсем Кӑпас колхозӗ юлса пынипе аптранӑ. Председатель вырӑнне ларса та, бригадирсем вырӑнӗнче те чупса пӑхнӑ вӗсем. Ӗçченреххисем тата тырӑ та вырнӑ, çӗмел тунӑ. Анчах колхозри ӗçсем çав-çавах тимӗр шапа уттипе пынӑ. Сӑлтавӗ—председатель япӑх ӗçлениче, ӗçе йӗркелеменнинче, ӗç дисциплини сӳрӗккинче пулнӑ. Ун чухнехи председатель хӑйӗн тӳлӗмӗнче ытларах ларма юратнӑ, хире питех тухса курман. Колхозниксем, председатель сӳрӗк ӗçленине кура, ӗçе васкаман, тухсан та вӗли-шели анчах ӗçленӗ.

Çав вӑхӑтрах кӳршӗри «Заря» колхозра ӗç вӗресе тӑнӑ. Ана отечественнӑй вӑрçӑ инваличӗ Скворцов ертсе пынӑ. Кӑпассем итем çинче ӗçленӗ вӑхӑтра çармӑскассисем ӑшӑ пӳртре авӑн ӗçки ӗçнӗ. «Çынсем ӗçеççӗ, эпир çаплах тӗрмешетпӗр-ха», — тенӗ ӳкӗнсе кӑпассем. Вӗсем хӑйсен председателӗ начарришӗн тарӑхнӑ, «Заря» колхозӑн председательне—Скворцова мухтанӑ.

«Николай Ермолаевич Скворцов Кӑпас çынни, хамӑр ял çынни хамӑр ялтах ӗçлетӗр»,—сӗнӳ панӑ Кӑпас старикӗсем. Çапла тунӑ та. Çак çул пуçламӗшӗнче Скворцов юлташа Кӑпасри «КИМ» колхоз председательне чӗнсе илнӗ.

Çар тумне тӑхӑннӑ патмар çын Кӑпасӑн икӗ çухрӑм тӑршшӗ тӑсӑлса выртакан урамӗ тӑрӑх ирӗн-каçӑн утма пуçланӑ. Вӑл пур çӗре те çитме ӗлкӗрнӗ. Правленире те, фермӑра та, складсем патӗнче те ӑна курма пулнӑ.

Çӗнӗ председатель ӗçе тытӑннӑ чухне колхозри хуçалӑх юхӑнчӑк, çурт-йӗрсем ишӗлчӗк пулнӑ. Виçӗ армантан пӗри те ӗçлемен. Кӳлсе тухма çуна-урапа пулман. Кашни 15 лаша пуçне — пӗр урапа. Колхоз государство умӗнче пысӑк парӑмра пулнӑ. Тырпул, аш-какай парса татман...

Анчах председатель çав йывӑрлӑхсенчен хӑраман. Вӑл, унччен конюхра, бригадирта, ферма заведующийӗнче ӗçлесе курнӑскер, ӗçе хӑюллӑн тытӑннӑ. Тавçӑруллӑ председатель ялхуçалӑх уставӗ çине таянса ӗçлеме тытӑннӑ. Ӗçе тӑтӑшах тухман хӑш-пӗр колхозниксене судпа айӑпланӑ. Çирӗп йӗрке кахалсене те ӗçченлетнӗ. Сӑмахран судпа айӑпланиччен пӗтӗмпе те 5 ӗç кунӗ анчах тунӑ. Е. Фомина пӗр уйӑх хушшинчех 70 ӗçкунӗ тунӑ.

Николай Емельянович, фронтра пулса курнӑскер, вӑрçӑ вӑхӑтӗнче мӗнле ӗçлемеллине лайӑх пӗлет. Икӗ хут, виçӗ хут вӑя хурса ӗçлемелле. Вӑрçӑччен икӗ çын тунӑ ӗçе халӗ пӗччен тумалла. Çӗнӗ председатель колхозниксене Сталин юлташ хушнӑ пек ӗçлеме çӗкленӗ.

Çураки хӗрӳ вӑхӑт. Çурхи кун çулталӑк тӑрантарать. Колхозниксем кашниех хӑйсене хушнӑ ӗçе срокчен тума тӑрӑшнӑ. Колхоз çурхи тырӑсене 6 кун хушшинче акса пӗтернӗ. Çав вӑхӑтрах кӗр калчисем начар тухнӑ вырӑнсене пурӗ 28 гектар тепӗр хут акса хӑварнӑ.

### 2. ӖÇ ÇИНЧЕ

—Вырма вӑхӑт, тухас пулать,—тенӗ председатель колхозӑн анлӑ уйхирне пӑхса çаврӑнса. Хатӗрленӳ ӗçӗсене тимлӗн тунӑ, колхозниксем пурте пӗр çын пек кар уя тухнӑ. Машиноведсем машинӑпа вырнӑ, çулакансем çулнӑ, ыттисем—çурлапа вырнӑ.

Анчах алӑпа выракансем пурте пӗрле тӑрса ӗçленӗ, кашнине уйрӑм лаптӑк уйӑрса пани пулман. Çакна председатель иккӗмӗш кунхинех асӑрхать. «Капла вырсан хӑвӑрт пулмасть», — тавçӑрса илет вӑл.

Виççӗмӗш кунхине бригадирсене ир-ирех пухать те хире илсе тухать. Ыраш сывлӑмӗпе мӑй таран ислейсе, председательпе бригадирсем кашни колхознике уйрӑм лаптӑк виçсе панӑ. Норма 0,10 гектар. Çавна ир тухса каçчен вырса пӗтермелле.

Халӗ ӗнтӗ кашни колхозник хӑйӗн лаптӑкӗ çинче, çав лаптӑка унӑн паян вырса пӗтермелле. Хӑвӑрт выракансем юри тенӗ пекех юнашар тӑнӑ. Вӗсем хушшинче—тупӑшу. Коммунистка Елена Громова малтанхи кунах 0,30 гектар вырать. Виçӗ норма! Фронтовик арӑмӗсем Александра Орловӑпа Александра Савельева та унтан юлмаççӗ. Хӑш-пӗр кун вӗсем Громовӑран та ирттереççӗ. Çапла тухӑçлӑ ӗçленипе мӗнпур колхозниксем хушшинче ӑмӑрту саралса каять. Пӗри тепринчен хӑвӑртрах ӗçлет. Кам мӗнле ӗçленине бригадирсем кашни кун шута илсе хак хураççӗ. Лайӑх ӗçлекенсене мухтаççӗ, начаррисене ятлаççӗ.

Председатель пур çӗре те çитет, пурне те асӑрхать. Ир-ирех уя тухать кам ӗçре çуккине тӗрӗслет, бригадире ун патне ярать.

„Ким“ колхоз председателӗ Скворцов юлташ.

Каçхине правленире канашлу. Бригадирсемпе звеноводсене пухса, кулленхи ӗç итогне тӑваççӗ, ыранхи ӗçсене палӑртаççӗ.

—Çывӑрма памасть пире Микула пиччe,—тет председатель пирки бригадир Ефросиния Павлова.

Ку сӑмахсене колхозниксем те калаççӗ. Ӗç çинче вӗсене чӑнах та ирттӗнӗ çулсенчи пек çывратман. Ирхине кӑвак шуçӑмпах хире кӑларса, сӗм тӗттӗмччен ӗçлеттернӗ. Уйӑхлӑ каçсенче çӗрле те ӗçленӗ. Çӑмӑрлӑ кунсенче те ӗç чарӑнман. Çӑмӑрсӑр вӑхӑтӑн кашни сехечӗпе усӑ курса, кӗлтесене витнӗ итем айне турттарнӑ, çӑмӑр çунӑ вӑхӑтра çапнӑ. Кашни бригадӑра пӗрер молотилка. Колхозӗпе пурӗ 4 молотилка кӗрленӗ. Тырӑ вырас, авӑн çапас ӗçсем пӗр вӑхӑтрах пулса пынӑ. Çапла колхоз мӗнпур тырӑсене 17 кунта вырса, сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне авӑн çапса пӗтернӗ. Çак вӑхӑт тӗлнех çӗрулми кӑларса пӗтерме те, кантӑр сӳсне хутма та ӗлкӗрнӗ.

Колхозри пӗтӗм ӗçе тенӗ пекех хӗрарӑмсем туса тӑраççӗ. Хӗрарӑмсем кунта—чӑннипех те пысӑк вӑй. Вӗсем пурте кӑçал ӗçкунӗсен минимумне ирттерсе тултарнӑ. Чылайӗшӗ—ответлӑ ӗçсенче. Кладовщик, бригадирсем—пурте хӗрсенчен. 1-мӗшпе 3-мӗш бригадӑсен бригадирӗсем Ефросиния Павловӑпа Матрена Сорокина кирек мӗнле ӗçре те малта пыраççӗ.

—Тепӗр арçын вӗсем чухлӗ пултараймасть,—теççӗ хӗрупраç бригадирсем пирки кӑвак сухаллӑ старикcем.

Государствӑна тырӑ леçес ӗç малтанах юлса пынӑ. Çамрӑксем пуçарнипе транспорт бригади тунӑ. Бригадирне ӗçчен хӗре—Анна Кольцовӑна лартнӑ. Кольцова çак ӗçе мӗнпур пултарулӑхне хунӑ. Çапнӑ тырра çийӗнчех тиесе ӑсатса тӑнӑ. Часах тырра графикран ирттерсе леçме пуçланӑ. Колхоз октябрь уйӑхӗччен государствӑна тырпул парса татнӑ.

Хальхи вӑхӑтра колхозӑн государство умӗнче нимӗнле парӑм та çук. Колхоз килес çулшӑн тӳлет. Какая, сӑмахран 1944 çулшӑн татса 1945 çулшӑн та 9 центнер панӑ.

Фронтовой уйӑхлӑхра колхозри ӗçсен хӑвӑртлӑхӗ татах та ӳснӗ. Кӗрхи çӗртмене 120 гектар вырӑнне 145 гектар туса хӑварнӑ. Уйӑхлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех выльӑх витисен кантӑкӗсене лартнӑ, шӑтӑк-çурӑксене питӗрнӗ. Сурӑхсем валли çӗр пуçлӑх çӗнӗ вите тунӑ. Выльӑх апачӗ çителӗклӗ: силоса планран ирттерсе 40 тонна хывса хӑварнӑ, 17 гектар улӑх çинчи утта икӗ хутчен çулнӑ, темиçе тонна йӗкел хатӗрленӗ.

### 3. ÇУРАКИНЕ ХАТӖРЛЕНЕÇÇӖ

Колхоз мӗнпур ялхуçалӑх ӗçӗсене октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӗçлерӗ. Шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, кашни гектартан вӑтам шутпа ыраш 16 центнер ытларах, сӗлӗ 14,5 центнер, урпа 13 центнер тухнӑ. Çуркунне ыраш калчи çӗрнӗ вырӑна акса хӑварнӑ. Урпа тӗлӗнмелле тухӑçлӑ пулнӑ: икӗ гектартан 68 центнер тухнӑ.

Пур фондсене те кирлӗ чухлех хывса хӑварнӑ хыççӑн, колхозра тырпула ӗçкунӗсем тӑрӑх валеçрӗç. Опытлӑ счетовод В. Аргандеев ӗçкунӗсене пурне те тӗплӗн шута илсе ситерне. Ӗçкунӗ çине ыраш, урпа, пӑрçа—пурӗ 1,5 килограмм тивет. Çӗрулми пӗрер килограмм валеçнӗ. Тӑрӑшса ӗçленӗ колхозниксем 50-шар пӑт таран тӗштырӑ илеççӗ.

Тырпула ӑнӑçлӑн пуçтарса кӗртнӗ, государство умӗнчи парӑмсене татнӑ тата выльӑх-чӗрлӗх фермисене хӗле хатӗрлесе çитернӗ ятпа колхозра хаваслӑ пуху пулса иртрӗ. Колхоз председателӗ Скворцов юлташ унта хӗрӳллӗ сӑмах каларӗ. Вӑл хӑйӗн колхозникӗсене ялхуçалӑх ӗçӗсене ӑнӑçлӑн вӗçленӗ ятпа саламларӗ.

—Анчах пирӗн малашне тата вирлӗнрех ӗçлемелле. Фронтпа тӑван çӗршыва ытлӑн-çитлӗн тырпул, пахча-çимӗç, аш-какай, промышленноçа чӗртавар парса тӑрас тесен, пирӗн мӗнпур вӑйсене хурса тӑрӑшмалла. Пирӗн умра пысӑк задача тӑрать: çуракине тӗплӗн хатӗрленмелле, —терӗ пухура Скворцов юлташ.

—Çуракине те районра пуринчен малтан хатӗрленсе çитетпӗр!—терӗç колхозниксем председатель чӗнӗвӗ çине ответлесе.

Унтанпа уйӑх иртрӗ. Кӑпассем хӑйсен сӑмахне манман, вӗсем ӑна ӗçе кӗртсе пыраççӗ.

Çуракине хатӗрленме вӑрлӑхран тытӑннӑ. Вӑрлӑх — чи кирли, унтан килес çулхи тырпул тухӑçлӑхӗ килет. Кунта пур тырӑсен вӑрлӑхӗсене те çителӗклӗ уйӑрса хӑварнӑ. Сӗлӗпе ясмӑк вӑрлӑхӗсем, сӑмахран, ытлашшипех. Вӗсене сортировкӑпа тасатнӑ. Тулӑ вӑрлӑхӗ викӑпа хутӑш пулнӑ. Ӑна алӑпа юхтарса сортланӑ.

Тасатнӑ вӑрлӑхсене районри лабораторире тӗрӗсленӗ. Тӗрӗслӳ результачӗсем аван.

Вӑрлӑхсемпе пӗр вӑхӑтрах ялхуçалӑх машинисене юсама тытӑннӑ. Йӗркеллӗн ӗçлеме 24 плуг, 24 сӳре кирлӗ. Хальхи вӑхӑтра çавӑн чухлӗ плугсемпе сӳресем юсавлисемех пур. Çӗмӗрӗлсен-тусан кӳлме татах 6 плуг юсаççӗ. 3 сеялкӑран 2-шӗ йӗркеллӗ, теприне те часах юсаса çитереççӗ.

Нумаях пулмасть урапасене шута илсе тухрӗç. Юсавлӑ урапасем кашни бригадӑна 5-шер тивеççӗ. Çӗнӗрен илнӗ 12 стан кустӑрмасене шута илсен, кӳлме юрӑхлӑ урапасен хисепӗ 32 çитет.

— Çуркуннеччен тепӗр 8 урапа тӑвасах пулать,—тет председатель.

Кунта ут таврашӗсене çийӗнчех çӗнетсе тӑраççӗ. 125 постромка хатӗрленӗ, 120 тилхепе илнӗ. Çитес вӑхӑтрах сӳсменсене юсаса çитереççӗ.

Çуракинче турттӑм вӑйӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Çавна шута илсе, лашасене çирӗплетме кунта халех тӑратнӑ. Анчах халь фуража пӗчӗкрех нормӑпа параççӗ, çуракине тухас умӗн вӑл нормӑна ӳстереççӗ.

— Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе туса çитермен ӗçсем пур-ха. Вӗсене эпир çӗнӗ çула ямастпӑр,—татӑклӑн калать Скворцов юлташ.

Сталин юлташ Октябрь уявӗнче тунӑ доклад çине ответлесе, пирӗн колхозсем государствӑна тырпул сутма тытӑнчӗç. Çак патриотла ӗçе «Ким» колхоз та активлӑн хутшӑнчӗ. Вӑл государствӑна 600 центнер тырӑ сутса, ӑна Сталинла Конституци кунӗ тӗлне хатӗрлев пунктне леçрӗ. Сутнӑ тырра турттарас тӗлӗшпе «Ким» колхоз кӳршӗри «Аврора» тата «Заря» колхозсене пысӑк пулӑшу пачӗ. «Аврора» колхозӑн тыррине 19 лавпа турттарчӗ.

— Пӗр мала тухнӑ-тӑк, яланах малта пулар!—çак ӗмӗтпе ӗçлеççӗ «Ким» колхоз членӗсем.

**Тарас ИВАНОВ.**
**(Хамӑр корр.).**

Кӑпас, Сӗнтӗр районӗ.

# Ют çӗршывсенче

## ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНӖСЕН ВӐРÇӐ ӖÇӖСЕМ

ЖЕНЕВА, декабрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Югослави халӑхне ирӗке кӑларасшӑн çапӑçакан çарӑн чаçӗсем Лековина-Драговина секторӗнче Германи колоннине аркатса тӑкнӑ. Хӗвелтухӑç Боснире Тузла таврашӗнче вӗсем малалла тапӑнса пыраççӗ.

Фронтӑн Власеница-Рогатица секторӗнче вӑйлӑ çапӑçусем пыраççӗ. Нимӗçсем çапӑçава танксем кӗртсе янӑ та тӗп çулсем тӑрӑх малалла куçса пыраççӗ.

Черногорире Подгорица-Цетинье çулӗ çинче халӑх çарӗн чаçӗсем гитлеровецсемпе тата четниксемпе çапӑçаççӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн 320 вилли выртса юлнӑ.

Словенире çав çарӑн чаçӗсем тӑшман колоннине аркатса тӑкнӑ. Тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене нумай вӗлерсе е амантса пӗтернӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ.

## ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВӐРÇӐ

ЛОНДОН, декабрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтереççӗ: Араве утравӗсем çинче союзниксен çарӗсем темиçе пункт тытса илнӗ те халӗ çыран тӑрӑх малалла куçса пыраççӗ. Трофейӑсем чылай тытса илнӗ. Хуон утравӗ çинче (Çӗнӗ Гвинея) Япони çарӗсен юлашкийӗсене Санг шывӗн вӑррине пӗтерсе пыраççӗ.

Императрица Августа бухтинче (Букенвиль утравӗ) союзниксен çарӗсем, артиллери вӑйлӑн пулӑшса пынипе, хӗвелтухӑçнелле куçса пыраççӗ.

ТОКИО, декабрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пӗлтерет: союзниксен çарӗсем Меркус сӑмсахӗ çине (Çӗнӗ Британия) пырса аннӑ. Халӗ унта Япони çарӗсене союзниксен çарӗсемпе çапӑçма питӗ йывӑр.

Гилберт утравӗсем çинче çапӑçнӑ чухне японецсен Сибадзаки ятлӑ контрадмиралӗ пӗтнӗ.

## ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ РОВНО ХУЛИНЧЕ ИРТЕХНИ

СТОКГОЛЬМ, декабрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Швецире тухса тӑракан «Афтонтиднинген» ятлӑ хаçат çапла пӗлтерет: Ровно хулинче гитлеровецсен пуçлӑхне СС оберфюрерне Альфред Функа вӗлернӗшӗн СС çарӗсемпе гестаповецсем хулари 100 çынна персе пӑрахнӑ. Унсӑр пуçне тата Ровно хулинчи çынсене нумайӗшне концентрациллӗ лагерьсене хупнӑ.

## КӖСКЕН

● Галифакс хулин (Канада) хула Совечӗ Новороссийск хулине шефа илнӗ. Новороссийск хулинчи халӑх валли медикаментсем, апат-çимӗç тата тумтир яма хатӗрленет.

● Германие ирӗксӗр ӗçе ярасран хӑтӑлса юлас шутпа Рим хулинчен 350 пин çын тухса тарнӑ. Çынсем, хӑйсене тытасран, пинӗ-пинӗпе шӑтӑксенче пытанса пурӑнаççӗ.

● Франци халӑхӗ Германие каторгӑлла ӗçе пуçтарса каяссинчен пӑрӑнать. Лионра Германие илсе кайма палӑртса хунӑ 10 пин çынтан гитлеровецсем 32 çынна çеç мобилизацилеме пултарнӑ.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**


**ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР**

декабрӗн 20-мӗшӗнчен пуçласа кашни кун саслӑ илемлӗ

**„ЖДИ МЕНЯ“**

лирикӑллӑ çӗнӗ кинеповесть кӑтартать.

Сеанссем çак вӑхӑтра пуçланаççӗ: 18, 20 тата 22 сехетре.


СССР Совнаркомӗн 1941-мӗш çулхи июлӗн 23-мӗшӗнчи 1893-мӗш №-лӗ постановленийӗ тӑрӑх тата Шупашкар горисполкомӗн 1943-мӗш çулхи декабрӗн 9-мӗшӗнчи постановленийӗ тӑрӑх, Горисполком çумӗнчи ӗç вӑйне шута илсе валеçсе тӑракан бюро предприятисен, учрежденисен тата промартель строительствисен руководителӗсене ӗç вӑйне шута илсе валеçсе тӑракан бюрона çакӑн çинчен пӗлтерсе тӑма хушать: штатсене чакарнӑ пирки, строительствӑна чарса лартнӑ пирки, сезонлӑ е вӑхӑтлӑх ӗç пӗтнӗ пирки—ялан ӗçлекен тата вӑхӑтлӑха кӑна ӗçлекен рабочисемпе служащисене ӗçрен хӑтарма палӑртса хуни çинчен, çавӑн пекех тата рабочисемпе служащисене ӗçрен хӑтарни çинчен пӗлтерсе тӑмалла. Çавна пӗлтернӗ чухне мӗнле рабочипе служащие ӗçрен хӑтарма палӑртса хунине е кӑларса янине кӑтартса памалла, вӗсен хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, хӑш çулта çуралнине, вӗсен квалификацине тата килти адресне кӑтартса çырмалла.

ГОРИСПОЛКОМ ÇУМӖНЧИ ӖÇ ВӐЙНЕ ШУТА ИЛСЕ ВАЛЕÇСЕ ТӐРАКАН БЮРО.

1943-мӗш çул вӗçленнӗ май Чӑвашпромстрахкасса хӑйӗн системинче кӗрекен мӗнпур артельсене [illegible] çӗсене январӗн 10-мӗшӗнчен [illegible] сӑран мӗн [illegible] памалла [illegible] пӗлтерет.

Çав срок ирттсен, çак тӗлӗшпе нимӗнле претензисене те йышӑнмастпӑр.

ЧӐВАШПРОМСТРАХКАССА. 2—1.

# Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

## Пурӑнмалли çуртйӗр тата коммунальнӑй предприятисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943-мӗш çулхи ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, пурӑнмалли çуртйӗр тата коммунальнӑй предприятисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура Çӗмӗрлери коммунальнӑй прачечнӑй, Шупашкарти коммунальнӑй хуçалӑхӑн обозӗ, Çӗмӗрлери парикмахерски хуçалӑх мала тухнӑ тесе йышӑннӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне Çӗмӗрлери коммунальнӑй прачечнӑйрах (директорӗ Клибышев юлташ, коммунальнӑй хуçалӑх заведующийӗ Анишков юлташ) хӑвармалла тунӑ тата ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисене премилеме 5 пин тенкӗ укçа пама йышӑннӑ. Шупашкарти коммунальнӑй хуçалӑхӑн обозне (заведующийӗ Павлов юлташ) ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисене премилеме 3 пин тенкӗ укçа (пӗррӗмӗш премии), Çӗмӗрлери коммунальнӑй парикмахерски хуçалӑхне—2 пин тенкӗ укçа (иккӗмӗш премии) пама йышӑннӑ.

## *Укçа-тенкӗ пухас ӗç юлса пырать*

ШАХАСАН. (**Хамӑр корр.**). 1943-мӗш çулхи 4-мӗш квартал вӗçленесси 10 кун çеç юлчӗ. Анчах Энтриял, Шӑхаль, Шӗкӗр, Высоковка ялсовечӗсем 4-мӗш квартал планне 20—30 процент çеç тултарнӑ-ха. Энтриял ялсовечӗн председателӗ Никифоров хӑй те 590 тенкӗ ялхуçалӑх налогӗ тӳлесе татман, унӑн арӑмӗ 170 тенкӗ военнӑй налог тӳлемен. Энтриялӗнчи колхоз председателӗ Рыжковпа унӑн арӑмӗ те ялхуçалӑхпа военнӑй налогсене тӳлемен.

Единоличниксем хушшинче укçа-тенкӗ пухас ӗç пур ялсовечӗсенче те чӑтма çук юлса пырать. Сӑмахран, Энтриял ялсоветӗнчи Михайлов Лаврентий 5 пин тенкӗ налогран пӗр пусне те тӳлемен. Çавӑн пекех Çӗньял Чуракассинчи Г. Львов —8 пин тенкӗ, Е. Михайлов — 9 пин тенкӗ тӳлемен.

Хӑшпӗр колхоз председателӗсем колхоз дохочӗсем тӑрӑх тӳлемелли налога вӑхӑтра памасӑр тӑраççӗ. Сӑмахран, «Молодой колхозник» колхоз 4.187 тенкӗ, «Свобода» колхоз 3.373 тенкӗ тӳлемен.

Страховани укçине пухасси те юлса пырать. Районра пӗтӗмпе 10 колхоз страховка укçисене тӳлесе татман. Сӑмахран, Ушанарти Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 9.393 тенкӗ, «Соревнование» колхоз 3.630 тенкӗ, «Прожектор» колхоз 6.055 тенкӗ тӳлемен.

Çӗнӗ çулччен пур ялсовечӗсемпе колхозсен те хӑйсен парӑмӗсене парса татмалла. Çак ӗçре финагентсемсӗр пуçне ялсенчи пӗтӗм активӑн тӑрӑшса ӗçлемелле, парӑмсене тӳлес тӗлӗшпе хӑйсен пример кӑтартмалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнӑç пайӗн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1176 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.